39.6g
Н-63
10088-4хч

## дриян Николаев



# ТĔНЧЕ УÇЛĂХĔНЧЕ

Национальная библиотека ЧР
4-010088



август 1962 çул





К39.6Д
Н63

Андриян Николаев

# ТĔНЧЕ УҪЛĂХĔНЧЕ



*Автобиографиллĕ повеҫ*



**УМЕН КАЛАНИ**

Уйрăм çынсене мар, чи хăюллă çынсене те мар, пĕтĕм халăха, пĕтĕм наци мухтав кӳрекен паттăр ĕçсем пур. Совет çыннисем космоса штурмлани шăпах çавăн пек чаплă ĕç, ун пекки историре халиччен пулман-ха. Ку вăл — пĕтĕм халăх паттăрлăхĕ.

Çăлтăрсем хушшине çул хывма пирĕн çĕршыври пиншер, миллионшар çын хутшăнать. Калама çук хăватлă космос карапĕсем тума рабочисемпе ученăйсем, тыр-пул ăстисем, кам çынсене çутă, çăкăр, ăшă, пĕлӳ парса тăрать — çавсем пурте хăйсен вăйĕпе ăс-хакăлне панă. Социализмла Тăван çĕршыв çăлтăрсем хушшине чи малтан кайса çӳренĕ паттăрсене тивĕçлипе хисеплесе чыслать. Унăн паттăр ывăлĕсенчен пĕри — Виççĕмĕш космонавт та çав пысăк чыса тивĕçлĕ пулчĕ — ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Андриян Григорьевич Николаев, чăваш хресченĕн ывăлĕ, тĕнче уçлăхне чи малтан çул хывнă çынсенчен пĕри пулчĕ. Вăл хăйĕн çăлтăр тăванĕпе Павел Романович Поповичпа пĕрле историре пĕрремĕш хут темиçе та-



## МАНӐН ТӐВАН ТАВРАЛӐХАМ

Пирӗн Шуршӑл ялӗ таҫтанах курӑнса ларать. Ял ҫывӑхӗнче — хӑмла вырӑнӗ, хӑмла аври телефон юпи ҫӳллӗшех явӑнса хӑпарать, шӑрши вара ӳсӗртсех ярать. Кӑкӑр тулли сывлатӑн уҫӑ сывлӑшпа.

Шуршӑл — «Шурӑ ҫӑл» тенинчен пулса кайнӑ. Пирӗн унта ҫӑл куҫӗсем шутсӑр нумай, кашнин хӑйӗн ячӗ пур. Пӗрне — Сивӗ ҫӑл, теприне — Ҫутӑ ҫӑл, виҫҫӗмӗшне — Шарлак ҫӑл, тӑваттӑмӑшне Сенкер ҫӑл теҫҫӗ. Кунта тӑрна куҫӗ пек тӑрӑ ҫӑлсем пур. Вӗсенчен пирӗн ялсем ӗҫме шыв ӑсаҫҫӗ. Ытти ҫӑлсенче ӗне, лаша шӑвараҫҫӗ, хӗрарӑмсем кӗпе чӳхеҫҫӗ.

Вàл ялан таса, çутă пултăр, пирĕн Атăл çинчи шуçăм пек. Вăл лайăх пултăр, çынсене ырлăх кӳтĕр, хамăрăн аслă Советлă Тăван çĕршыв пек. Эсĕ унăн хĕрĕ. Хĕрĕ те, тарçи те. Пурнăçра юлашки утăм тăвас сехет çитсен, чи малтан ăна, Тăван çĕршыв-аннемĕре аса ил. Çапла калама тивĕç пул:

— Хам чĕреме сана патăм, Тăван çĕршывăм!

